Петĕр Хусанкай

**Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ!**

Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ!
Кирек ăçта пулсассăн та,
Ман асăмра эс чĕрĕ, сывă,
Пуласчĕ хам та асунта.

Пĕлетĕп: Крымăн е Кавказăн
Илемлĕрех çĕршывĕсем.
Çур çуллăх хĕл йăлăхтарсассăн,
Аса килмеççĕ мар вĕсем.

Инçе çĕршывсенче те куртăм
Санран чылай хитрисене.
Анчах эс ман сăпкам та çуртăм,
Эс – ман савни те ман анне.

Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ!
Сан чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхӳпе,
Тен, эп те çĕр çине йĕр хывăп
Сан пĕчĕкçĕ пĕр мĕлкӳ пек.

Çав илĕртет шухăшăма та,
Çĕклет чуна та чĕреме.
Сан вилĕмсĕрлĕхне шанатăп,
Эс – тăсăн ман ĕмĕрĕме.

Çырни пулать ман вырăсла та,
Пирте халь унсăр май та çук.
Анчах мĕнле эп тунсăхлатăп
Тăван сăмахăма ун чух!

Европăра-и хам çӳретĕп
Е океанăн леш енче –
Сан евĕрнех аса кӳретĕп,
Ăна туятăп тĕрлинчен.

Хăш чух лаç тĕтĕмĕн шăрши вăл
Хăш чух тухъяллă сăн-сăпат...
Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ!
Кирек хăçан та эп санпа.

Сан ырă ятупа эп элчĕ
Таçти çĕре те халăха.
Санпа ман ятăм пиеленчĕ
Никам салтми, яланлăха!

1965

*Хузангай, П. Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ : сăвă // П. П. Хузангай // Хушка хумсем / П. П. Хузангай : сăвăсем. – Шупашкар, 1967. – С. 233.*